26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАРТ 8 ЮНКУН 48(6543) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет хӗрарӑмӗн паттӑрлӑхӗ

Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунне— Мартӑн 8-мӗшне совет хӗрарӑмӗсем ҫулталӑк пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар фашистла нимӗҫ ҫарӗсене ҫӗнтерӳллӗн аркатса пынӑ историллӗ вӑхӑтра уявласа ирттерессӗ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенченех пуҫласах совет хӗрарӑмӗсем, хайсен машӑрӗсемпе, ывӑлӗсемпе, пиччӗшӗ-шӑллӗсемпе пӗрле тӑрса, хамӑрӑн социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн, совет влаҫӗ панӑ хайсен прависемпе ирӗклӗхӗшӗн хӗрхенмесӗр кӗрешеҫҫӗ.

Социализм строе хӗрарӑма общество пурнӑҫӗн пур ӗҫӗсенче те арҫынсемпе пӗр тан хутшӑнма майсем туса пачӗ. Совет влаҫӗ ҫулӗсенче хӗрарӑмӑн пурнӑҫ ырлӑхӗ, культурӑллӑ шайӗ, политикӑлла активлӑхӗ калама ҫук вӑйлӑн ӳсрӗ.

Октябрьти Социализмлӑ аслӑ революцин кунӗ ырлӑхсем, совет государстви тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳсем пирӗн чӑваш хӗрарӑмӗн пурнӑҫне уйрӑмах ҫӗнетсе тӑрассӗ. Патша саманинче чӑваш хӗрарӑмӗ ҫӗр паман, унӑн ят пулман, вӑлах ту сутнӑ пек, [illegible]. Вӑл чи хӑрушӑ чирсемпе—трахома чирӗпе пурнӑҫӗ те ытларах асапланнӑ. Чӑваш хӗрарӑмӗсен нумай пин ҫын ӗмӗрлӗхсӗр суккӑр пулса ларнӑ. Хӗрарӑмӑн пи—тӗтӗм хура пӳртӗн тӗпӗ кукӑрне пулнӑ.

Совет влаҫӗ чӑваш ӗҫхӗрарӑмне ӗмӗрхи пусмӑрран хӑтарчӗ, хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне [illegible] тума ҫул пачӗ, арҫынсемпе пӗр тан правӑсем пачӗ. [illegible] культура ҫутти паттӑрлӑх ӗҫне хутшӑнчӗ. Чӑваш хӗрарӑмӗ тӗттӗм тӗпел кукринчен тухса, халӑхпа общество пурнӑҫне, государства тытса пырас ӗҫе хутшӑнчӗ.

Хӗрарӑмсем, ӗсӗр те хаш
Этем шутне кӗтӗр,
Вучах умӗнчех ан иртӗр
Тексе ҫирӗп ӗмӗр.
Ӗмӗр чура пулма ҫитӗ,
Чура пулма намӑс!
Ирӗклӗ кунҫул тумашӑн
Тӑрӑр пурте харӑс!..

Ҫапла ҫырнӑ чӑвашсен революцилле поэчӗ Ҫеҫпӗл Мишши. Поэт чӗререн сунса каланӑ сак сӑмахсем халӗ пӗтӗмпех пурнӑҫа кӗчӗҫ. Пирӗн совет ҫӗршывӗнче хӗрарӑм хутшӑнман пӗр ӗҫ те ҫук. Совет хӗрарӑмӗсем, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле тӑрса, пирӗн ҫӗршыва социализмлӑ ҫуртне туса ҫитересишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ.

Совет халӑхӗн ирӗкне те телейне пӗтерес тесе фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем килсе тапӑнсан, ыхланлӑ тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма, хамӑрӑн тӑван ҫӗршывӑн хӑлхипе ирӗклӗхне, унӑн никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлеме, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, пирӗн ҫӗршывӑн хӗрарӑмӗсем те ҫӗкленчӗҫ.

Фашизма пусӗпех ҫапса аркатас тесе, тӑван совет ҫӗршывне аслӑ ҫӗнтерӳ кӳрес тесе, совет хӗрарӑмӗсем хайсен машӑрӗсемпе, ывӑлӗсемпе, пиччӗшӗ-шӑллӗсемпе вӑрҫӑ фронтра паттӑрла ӗҫсем тума хавасланатассӗ, вӗсен хайсен [illegible] хӗрарӑмӗсем ҫӗнтерӳ ҫывхартассӗ.

Ӗлӗк ҫӳрлӑва [illegible] станокӗсем умне тӑчӗҫ, тракторсем ҫинче комбайнсем ҫинче ӗҫлеме вӗренчӗҫ.

Промышленноҫра ӗҫлекен хӗрарӑм-работницӑсем производствӑри специальноҫсене вӗренсе алла илеҫҫӗ, фронта пулӑшас тесе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫара танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, автоматсем, винтовкӑсем, боеприпассем, тумтирсем ытларах та ытларах туса парассишӗн, продукци пахалӑхне лайӑхлатассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешеҫҫӗ.

Хӗрарӑмсен производствӑри паттӑрлӑхне кӑтартакан тӗслӗхсене вуншарӑн та ҫӗршерӗн пасе палӑртма пулать. Акӑ, пӗр ӳсӑллӑмасӑрах, пӗр заводри Зоя Данилова стахановкӑн ӗҫне илер. Вӑл пӗтӗмпе те 17 ҫулта кӑна-ха. Ята ҫитӗннӗскер, вӑл пысӑк завод пурнӑҫне вӑрҫӑччен кукӗҫне те курман. Халӗ вӑл Хӗрлӗ ялавлӑ та орденлӑ заводра слесарь пулса ӗҫлет. Йывӑр профессие вӗсе вӑхӑтрах вӗренсе алла илнӗшӗн, производствӑри задание кулленех 2—3 ҫыншӑн тултарса пынӑшӑн, ҫӗршывӑн фронт валли паха продукци туса панӑшӑн вӑл правительстве пысӑк наградине—«За трудовую доблесть» медаль илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Хӗрарӑм-колхозницӑсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче колхоз уйхирӗсене ӗҫе татса паракан вӑй пулса тӑчӗҫ. Хӗрарӑмӗсем хӗрсем ҫӗршер пин ҫын халӗ ӗнтӗ трактористсем, шоферсем, комбайнерсем, механиксем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Пирӗн колхоз производствин организаторӗсем пулса ӗҫлекен хӗрарӑмсен нумай йышлӑ кадрӗсем: колхоз председателӗсем, бригадирсем, фермӑсен заведующийӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Вӗсем пурте пӗрле пулса, фронта ҫӗр валли тырпул, пахча-ҫимӗҫ, сӗт-ҫу, аш-какай, промышленноҫ валли чӗр тавар ытлӑн-ҫитлӗн парассишӗн хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Ӗҫ паттӑрлӑхӗн тӗслӗхӗсене кирек хӑш колхозран, кирек хӑш МТС-ран илсе кӑтартсан та, вӗсем пирӗн хӗрарӑмсен патриотизмӗ ҫав тери пысӑкки ҫинчен, совет хӗрарӑмӗсем хамӑр тӑван ҫӗршыва пӗтӗм чун-чӗререн юратса тӑни ҫинчен калаҫҫӗ. Первомайски МТС-ри ҫамрӑк трактористка Наталия Мефодьева, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче кӑна трактор ӗҫне вӗреннӗскер, хӑйӗн тракторӗпе иртнӗ ҫул планпа пӑхнӑ 350 гектар вырӑнне 585 гектар сухаланӑ, вӑрҫӑри моторсем валли ҫав тери кирлӗ горючие 1678 килограмм перекетлесе хӑварнӑ. Вӑл хӑй пек лайӑх ӗҫлеме хӑйӗн тантӑшне Анисия Езюковӑна вӗрентнӗ. Калинино районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхозри Фекла Ермолаева ертсе пыракан 1-мӗш бригада кашни гектартан 14,5-шер центнер тӗштырӑ, 160-шар центнер ҫӗрулми туса илнӗ. Сӗнтӗр районӗнчи «Ҫӗнӗ Юнга» колхозри колхозница Фекла Вазикова ҫулсерен кашни сысна аминчен 19—20 ҫӑвӑр илсе пӑхса ҫитӗнтерет. Ҫапла пур ҫӗрте те хӗрарӑмсем тӑван ҫӗршывшӑн, фронтшӑн тӗлӗнмелле паха ӗҫсем тӑваҫҫӗ.

Отечественнӑй вӑрҫӑра рабочисемпе колхозниксене хӗрарӑм-инженерсемпе техниксем, агрономсемпе зоотехниксем, наукӑпа искусство работникӗсем, врачсемпе учительсем, совет учрежденийӗсенчи работницӑсем активлӑн пулӑшса тӑраҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар ретӗнче те совет халӑхӗн мухтавлӑ хӗрӗсем—снайперсем, связисткӑсем, зенитчицӑсем, летчицӑсем тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешеҫҫӗ. Нумайӗшӗсем врачсем, фельдшерсем, медицина сестрисем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Фронтри паттӑрсем хушшинче пирӗн чӑваш хӗрӗсем те орденлӑ республикӑн чысне ҫӳлте тытса пыраҫҫӗ.

Ӗҫхӗрарӑмӗсем Хӗрлӗ Ҫарӑн аманнӑ воинӗсене тимлӗн те ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ. ашшӗ-амӑшӗсене ҫухатнӑ тӑлӑх ачасемшӗн тӑван амӑшӗсем пек тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫамрӑк ӑрӑва пӑхса ҫитӗнтерме государствӑна пулӑшаҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗнтерӳ ҫывӑх. Анчах тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатман-ха. Вӑрҫӑ совет хӗрарӑмӗсене, пӗтӗм совет халӑхне хушнӑ пекех, тылпа фронтра паттӑрла ҫӗнӗ ӗҫсем тума, фашистла нимӗҫ захватчикӗсене хӑвӑртрах тата пуҫӗпех ҫапса аркатас тесе татах та ытларах вӑй хурса кӗрешме хушать.

ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ, совет хӗрарӑмӗсене Хӗрарӑмсен Пӗтӗм Тӗнчери Кунӗ ячӗпе саламласа, Хӗрлӗ Ҫара ҫӗнтерӳ тума пулӑшассине татах та ытларах вӑйлатма чӗнчӗ, совет хӗрарӑмӗсем умне ҫӗнӗ, татах та пысӑкрах задачӑсем лартрӗ. Ленин — Сталин партийӗ лартнӑ аслӑ задачӑсене совет хӗрарӑмӗсем чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ, вӗсем хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва фашистла захватчиксенчен пӗтӗмпех тасатса ҫитерес тата ылханлӑ тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатас ӗҫе мӗнпур вӑйӗсемпе пӗлӗвӗсене парӗҫ!

Планран иртгерсе 14 пин тенкӗлӗх продукци

Шупашкарти чӑлхасем ҫыхакан фабрика коллективӗ (директорӗ Богуславская юлташ) Сталин юлташӑн Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ ятпа панӑ приказне ӗҫ тухӑҫне ӳстерниие ответлет.

—Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар фашистла нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене сывлама памасӑр Хӗвеланӑҫнелле хӑвалать. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗ тылри ӗҫсынӗсен ӗҫлес кӑмӑлне татах та ҫӗклет.

Эпир хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫлӑпӑр, фронтпа ҫӗршывӑн заказӗсене срокчен пурнӑҫа кӗртме пулатпӑр,—тет Богуславская юлташ.

Иртнӗ ҫулта фабрика, тӗрлӗ сӑлтавсене пула ӗҫлемесӗр тӑнипе, ҫулталӑкри производство планне срокра пурнӑҫлайман. Кӑҫал вара фабрика коллективӗ кашни уйӑхрах задание 5—6 кун малтан пурнӑҫласа пырать. Февраль уйӑхӗн планне фабрика 111 процент тултарчӗ, планран иртгерсе 14 пин тенкӗлӗх продукци пачӗ. Чӑлха ҫыхакан цех (начальникӗ коммунист Каменецкий юлташ) уйӑхри задание 150 процента яхӑн пурнӑҫларӗ. Матюшко, Иванова стахановкӑсем кулленех задание 125—130 процент тултараҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Малкина юлташ ертсе пыракан цех коллективӗ те юлашки вӑхӑтра тухӑҫлӑн ӗҫлеме тытӑнчӗ. Зинович, Крылова стахановкӑсем хӑйсен нормисене икӗ хут иртгерсе тултараҫҫӗ.

—Сулпуҫ приказӗ: — ҫӗнтерӳ вӑй-хӑвачӗ. Ҫӗнтерӳшӗн эпир ниме те шеллемесӗр ӗҫлетпӗр,—теҫҫӗ фабрикӑри рабочисемпе работницӑсем.

Ф. М-н.

РСФСР-ӑн 1-мӗш созыври Верховнӑй Совечӗн V-мӗш сессийӗ

РСФСР Верховнӑй Совечӗ йышӑннӑ законсем

Союзлӑ республикӑллӑ Оборона Халӑх Комиссариачӗ тӑвасси ҫинчен калакан ЗАКОН

СССР Верховнӑй Совечӗ «Союзлӑ республикӑсен ҫар формированийӗсене тӑвасси ҫинчен тата ҫавна май Оборона Халӑх Комиссариатне пӗтӗм союзлӑ комиссариатран союзлӑ-республикӑллӑ Халӑх Комиссариачӗ туса хурасси ҫинчен» йышӑннӑ закон тӑрӑх, Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗ ҫапла йышӑнать:

1. РСФСР-ӑн союзлӑ республикӑллӑ Оборона Халӑх Комиссариатне тӑвас.

2. РСФСР Конституцийӗ ҫумне ҫапла хушса ҫырас:

а) РСФСР Конституцийӗ ҫумне 16-б статья хушса ҫырас:

«16-б статья. Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин хӑйӗн ҫар формированийӗсем пур».

б) РСФСР Конституцийӗн 19-мӗш статьи ҫумне ҫакӑн пек «я» пункт хушса ҫырас:

«я) РСФСР-ӑн ҫар формированийӗсене тумалли йӗркене туса хурать».

в) РСФСР Конституцийӗн 45-мӗш статьи ҫумне ҫакӑн пек «з» пункт хушса ҫырас:

«з) РСФСР-ӑн ҫар формированийӗсене тӑвас ӗҫе ертсе пырать».

г) РСФСР Конституцийӗн 47-мӗш статьинче «РСФСР Халӑх Комиссариачӗсем» тенӗ сӑмахсем хыҫҫӑн «Оборона» сӑмах, 54-мӗш статьяра «РСФСР Халӑх Комиссариачӗсем» тенӗ сӑмахсем хыҫҫӑн «Оборона» сӑмах хушас.

РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.
РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.
Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ.

РСФСР-ӑн союзлӑ республикӑллӑ Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне тӑвасси ҫинчен калакан ЗАКОН

СССР Верховнӑй Совечӗ «Союзлӑ республикӑсене тулашри ҫыхӑнусем тӗлӗшпе полномочисем парасси ҫинчен тата ҫавна май Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне пӗтӗм союзлӑ комиссариатран союзлӑ республикӑллӑ Халӑх Комиссариачӗ туса хурасси ҫинчен» каларнӑ закон тӑрӑх, Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗ ҫапла йышӑнать:

1. РСФСР-ӑн союзлӑ-республикӑллӑ Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариатне тӑвас.

2. РСФСР Конституцийӗ ҫумне ҫапла хушса ҫырас:

а) РСФСР Конституцийӗ ҫумне 16-а статья хушса ҫырас:

«16-а статья. Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республики ют ҫӗршыв государствисемпе тӳрремӗнех ҫыхӑнма, вӗсемпе килӗшӳсем тума тата пӗр-пӗрин патне дипломатипе консул представителӗсем яма пултарать».

б) РСФСР Конституцийӗн 19-мӗш статьи ҫумне «ю» пункт хушса ҫырас:

«ю) тӗнчери государствӑсем хушшинчи ҫыхӑнусенче РСФСР ӗҫӗсене туса тӑрассине йӗркелесе хурать».

в) РСФСР Конституцийӗн 33-мӗш статьи ҫумне «з» тата «и» пункчсем хушса ҫырас:

«з) РСФСР-ӑн ют ҫӗршыв государствисенчи дипломатиллӗ представителӗсене вырӑна лартать тата каялла чӗнсе илет».

«и) ют ҫӗршыв государствисен хӑй патӗнчи дипломатиллӗ представителӗсен вӗсене унта вырӑна лартни е каялла чӗнсе илни ҫинчен калакан грамотисене йышӑнать».

г) РСФСР Конституцийӗн 45-мӗш статьи ҫумне «ж» пункт хушса ҫырас:

«ж) союзлӑ республикӑсем ют ҫӗршыв государствисемпе ҫыхӑнса тӑрас тӗлӗшпе ССР Союзӗ туса хунӑ пӗтӗмӗшле йӗркесем тӑрӑх, РСФСР ют ҫӗршыв государствисемпе ҫыхӑнас ӗҫе ертсе пырать».

д) РСФСР Конституцийӗн 47-мӗш тата 54-мӗш статьисем ҫумне «Оборона» сӑмах хыҫҫӑн «Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен» тенӗ сӑмахсем хушас».

РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.
РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.
Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ.

РСФСР Верховнӑй Совечӗн Президиум Председательне суйласси ҫинчен

Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Николай Михайлович Шверник юлташа РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ пулма суйлас.

РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗн пӗрремӗш заместителӗ И. ВЛАСОВ.
РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.
Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ.

А. Е. Бадаев юлташа РСФСР Верховнӑй Совет Президиум Председателӗн ӗҫӗсенчен хӑтарасси ҫинчен

Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Алексей Егорович Бадаев юлташа, вӑл урӑх ӗҫе куҫнӑ пирки, РСФСР Верховнӑй Совет Президиум Председателӗн ӗҫӗсенчен хӑтарас.

РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.
РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.
Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ.

РСФСР Верховнӑй Совет Президиум Председателӗн пӗрремӗш заместителӗ ҫинчен

Российӑн Советлӑ Федерациллӗ Социализмлӑ Республикин Верховнӑй Совечӗ ҫапла йышӑнать:

Иван Алексеевич Власов юлташа РСФСР Верховнӑй Совет Президиум Председателӗн Пӗрремӗш заместителӗ пулма суйлас.

РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Н. ШВЕРНИК.
РСФСР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ П. БАХМУРОВ.
Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи мартӑн 4-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 6-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 6-мӗшӗнче **УКРАИНӐРИ** пӗрремӗш фронт ҫарӗсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, Тарнополь облаҫӗнчи район центрӗсене—**ЗБАРАЖ** хулине тата **ВИШНЕВЕЦ, ЛАНОВЦЫ, НОВОЕ СЕЛО** ятлӑ ялсене, Каменец-Подольск облаҫӗнчи район центрӗсене—**ФРИДРИХОВКА** тата **ГРИЦЕВ** ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ. Ҫав шутра—**БАШКОВЦЕ, ЗАЛЕСЬЦЕ, ЖЕСЬНЮВКА, ЛОПУШНО, ШИЛЫ, КОШЛЯКИ, ОЖИГОВЦЫ, КУРИЛОВКА, ВОЛОЧИСК, ЛОЗОВА, МАНАЧИН, БОЛЬШИЕ ЖЕРЕБКИ, БОРЩЕВКА, КОЛКИ, РЕШНЕВКА, ВЛАШАНОВКА, НЕЧАЕВКА, МОКЕЕВЦЫ, РАШТОВКА, ПИСАРЕВКА, ГУБИН, ЮЗЕФОВКА, ОЖАРОВКА, МШАНЕЦ, МОТОВИЛОВКА** ятлӑ пысӑк ялсем тата **КАРНАЧЕВКА, ЗАРУДЕЧКО, КРАСНОСЕЛЬЦЕ, ЗБАРАЖ, ВОЛОЧИСК, ВОЙТОВЦЫ, НАРКЕВИЧИ** ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем тӑшманӑн питӗ паха ҫыхӑнӑвне—**ПРОСКУРОВПА ТАРНОПОЛЬ** хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

Малтанлӑха палӑртнӑ тӑрӑх, мартӑн 4-мӗшӗпе 5-мӗшӗнче **УКРАИНӐРИ** 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫакӑн чухлӗ **ПӖТЕРСЕ ТӐКНӐ:** танксем—203, тупӑсем—250, бронемашинӑсем—30, минометсем—407, пулеметсем—500 ытла, автомашинӑсем 2.000 ытла, тӗрлӗ складсем—20.

Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 15.000 вилли ытла выртса юлнӑ.

Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн ҫарсем ҫакӑн пек трофейӑсем **ТЫТСА ИЛНӖ:** танксем—120, тупӑсем—202, минометсем—210, пулеметсем—260, бронепоездсем—1, автомашинӑсем—1.000 ытла, боеприпассемпе тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗ хунӑ складсем—23.

Нимӗҫсен 3.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткана илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ тата темисе участокра тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 5-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 89 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 20 самолетне ытла персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Пирӗн танкистсемпе пехотинецсем, вирлӗн пырапыра ҫапса, Тарнополь облаҫӗнчи район центрӗсене—Збараж хулипе шоссе ҫулӗсен паха узелне, Вишневец, Лановцы, Новое Село ялӗсене, унтан Каменец-Подольск облаҫӗнчи район центрӗсене—Фридриховка тата Грицев ялӗсене туртса илнӗ. Совет ҫарӗсем вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Волочиск чугун ҫул станцине йышӑннӑ, ҫапла вара вӗсем Проскуровпа Тарнополь хушшинчи чугун ҫула татнӑ.

Тӑшманӑн ҫав питӗ паха ҫулӗ ҫинчех пирӗн чаҫсем Войтовцы тата Наркевичи станцийӗсене йышӑннӑ.

Совет ҫарӗсем, айккипе ирте-ирте кайса, нимӗҫсен каялла чакмалли ҫулӗсене татаҫҫӗ, йӗпе-сапа тӑнӑ пирки вӗсем ахаль те сахал тӑрса юлнӑ. Мокеевцы ялӗн районӗнче тӑшманӑн чылай пысӑк ушкӑнне ҫавӑрса илсе аркатса тӑкнӑ. Теофиполь районӗнче пирӗн боецсем нимӗҫ пехотин полкне ҫавӑрса илнӗ те пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшман ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен калама ҫук пысӑк ҫухатусем тӳсет. Пӗр соединени чаҫӗсем кӑна пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 4.000 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Тӑшмантан 44 тупӑ, ултӑ кӗпҫеллӗ 16 миномет, 130 пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Нумай ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Нарва енче пӗр чаҫӑн боецӗсем тӑшман оборонин узелне атакӑланӑ. Стрелоксемпе автоматчиксен пысӑк мар ушкӑнӗсем, артиллери персе тӑнипе хӳтӗленсе, тӑшман укрепленийӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та, алӑ вӗҫҫӗн ҫапӑҫса, 300 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен оборона узелне туртса илнӗ чухне совет боецӗсем 4 тупӑ, 6 миномет, 20 станковӑй пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Пӗр чаҫан артиллерисчӗсем, пехотӑна пулӑшса пырса, нимӗҫсен 20 дзотне персе ишӗлтернӗ. «Тигр» йышши 3 танкне персе ҫӗмӗрнӗ тата тӑшман пехотин батальонне сапаласа янӑ.

* * *

Винница облаҫӗнчи Плисков местечкинче пурӑнакан ҫынсем фашистла нимӗҫ ирсӗрӗсем тискер ӗҫсем туни ҫинчен акт ҫырнӑ.

Актра ҫапла каланӑ: «Нимӗҫ оккупанчӗсем пирӗн районра юнлӑ режим туса хучӗҫ. Гитлеровецсем пӗр айӑпсӑр ҫынсене арестлетчӗҫ те вӗсене асаплантаратчӗҫ, унтан вара персе вӗлеретчӗҫ. Мария Ващенко учительницӑна персе вӗлерес умӗн калама ҫук хытӑ асаплантарчӗҫ. Нимӗҫсем Анна Гончарука, В. Андрейчук ҫемьине тата ытти нумай ҫынсене асаплантарса, персе вӗлерчӗҫ. Оккупаци вӑхӑтӗнче нимӗҫ ирсӗрӗсем 1.500 совет гражданне ытла персе е асаплантарса вӗлерчӗҫ. Ҫак тискер ӗҫсемшӗн пуринчен ытла ҫаксем айӑплӑ тесе шутлатпӑр: нимӗҫ Шустер, вахмистр Кинкель, гестаповецсем Герман тата Кушнер, ял хуҫалӑх ӗҫӗнчи офицер Беккер тата унӑн помощникӗ Яшке».

Акт ҫине Плисков местечкинче пурӑнакан ҫак ҫынсем алӑ пуснӑ: В. Омельчук, Д. Мельник, А. Столяр, партизанка Парнева, учительница Дьяченко тата ыттисем те.

Хĕрарăм-колхозницăсем, МТС-семпе совхозсенчи работницăсем, çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе, ăнăçлăн ирттерер! 1944 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешер!

Икĕ тантăш

Первомайски МТС-че ĕçлекен трактористка Наталия Мефодьева маттур та вăйпитти хĕрача.

— Вăрçăччен тракторист пулса ĕçлене арçынсем фронта, тăван çĕр-

Трактористка Наталия Мефодьева юлташ.

шыва сыхлама тухса кайрĕç. Вĕсем, хăйсен кун-çулĕсене шеллемесĕр, тăшманпа кĕрешеççĕ. Вĕсем пире, тылра ĕçлекенсене, нихăçанхинчен те вăйлăнрах ĕçлеме хушаççĕ,—тет Мефодьева юлташ.

Натали фронтра паттăррăн кĕрешекен хамăр тăвансене хăйĕн тылри чыслă ĕçĕпе ответлет. Вăл иртнĕ çулта «СТЗ-НАТИ» тракторпа планпа пăхнă 350 гектар вырăнне 585 гектар сухаларĕ, 1678 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ. Наталин чыслă та пархатарлă ĕçĕпе МТС-ра ĕçлекенсем мухтанаççĕ.

— Ĕçре çитĕнÿ тăвасси вăй хумасăрах пулмасть, — тет Натали. Вăл хăй кăна пултаруллăн ĕçлени çитĕлĕксĕррине кура, хăйĕн ĕçри тантăшĕсене вĕрентет, йывăрлăхран тухма пулăшать. Унпа пĕрле ĕçлекен Анисия Езюкова иртнĕ çул кăна трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухрĕ. Çакă çулпа та, ĕçпе те çамрăк хĕрачана Натали тăван аппăшĕ пек пулăшса пычĕ. Ĕç вăхăтĕнче çак икĕ тус пĕр-пĕрипе килĕшÿллĕн ĕçленине куратăн. Хăйĕн çывăх юлташĕ тата кăмăллă тантăшĕ Натали Анисине тăван аппăшĕ пек пулăшса пыни кашни ĕçрех палăрать. Аниса тракторпа ĕçлемелли иртнĕ çулхи плана 169 процент таран пурнăçларĕ тата 1351 килограмм горючи перекетлерĕ. Анисин мухтава тивĕçлĕ ĕçĕшĕн Натали те чĕререн савăнать. Савăнмасăр ара, ĕçри юлташ маттур пулсан, йывăрлăхсене çĕнтерме çăмăллине Натали лайăх туять. Çакă икĕ тантăш хăйсем ĕçлекен трактора 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчех юсаса ларчĕç. Ĕçе пуринчен те малтан тухса ĕçрен пуринчен те кая юлса кĕресси Мефодьевăпа Езюковăн йăлана кĕнĕ. Вĕсем ытти юлташĕсен тракторĕсене юсама та хĕрÿллĕн пулăшаççĕ.

Наталин хисеплĕ те чыслă ĕçне çĕршыв хаклать. Вăл ВЛКСМ Центральный Комитечĕн, Чăваш АССР Верховный Совечĕн Хисеплĕ грамотисене илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çавăн пекех Натали кăкăрĕ çинче ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн награди — «Отличник социалистического сельского хозяйства» значок ялкăшса тăрать. Çак хисеплĕ те чыслă парнесем çине ответлесе, Натали кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче татах та хĕрÿллĕнрех ĕçлеме пулчĕ. Натали тантăшĕ Аниси те çак шухăш-кăмăлпах пурăнать.

В. АЗАМАТ.

Патриотка

Хĕвел вĕтлĕх вăрман хыçне пытанас умĕн йывăç тураттисем хушшинчен хăйĕн йăлтăркка шевлине Васле-касси ялĕ çине илемлĕн сапаланă та часах çухалнă. Зойăшăн тинех кĕтнĕ вăхăт çитнĕ.

Юлашки кас икĕ çамрăк пĕр-пĕрипе чĕререн каласнă.

— Эпĕ тусăм, сирĕн ирĕклĕ пурнăçа сыхлама каятăп, тискер тăшмана хирĕç хамăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçăп,—тенĕ унăн тусĕ.

— Эпĕ те, савнă тусăм, кунта вăй-хала шеллемесĕр, патварлăн ĕçлĕп,—тенĕ тусне хирĕç Зоя. Çак сăмахсене каланă хыççăн вĕсем пĕрпĕрне алă парса уйăрăлнă.

1942 çулхи январь уйăхĕнче Зоя пĕр завода ĕçлеме кĕнĕ. Пирвайхи хут заводра пулнăскер, вăл мĕн ĕç тумаллине те пĕлмен.

Анчах та 17 çулхи Зоя малтанхи кунсенчех хастарлăн ĕçлени цехри мастера тĕлĕнтернĕ. Мастер Витков юлташ çамрăк хĕрачаран часах слесарь пуласса шанса тăнă.

Зоя Данилова квалификациллĕ рабочисен паха опычĕпе паллашнă, вĕсенчен ыйтса пĕлнĕ, смена ĕçлесе тухнă хыççăн вăл, темиçе сехетлĕхе цеха юлса, рабочисем ĕçленине пăхса çÿренĕ. Ĕçе чĕререн юратнă.

Зойăна ĕçлеме çăмăл пулман. Слесарь ĕçне вăл курсра та вĕренмен, ĕçлесе те курман. Анчах та ĕçлеме йывăр, ĕçлесси пулаймĕ, тесе тăман. Фронтри тусне панă сăмаха пурнăçлас шухăшпа çеç пурăннă.

Çак заводра уйăха яхăн ĕçлесенех вăл хăй тĕллĕн ĕçлеме пуçланă. Хăшпĕр кун, цехран 18—20 сехет хушши ниçта тухмасăр ĕçлесе, икĕ-виç çын нормине пĕччен пурнăçланă. Ăна слесарь ĕçне вĕрентнĕ мастер Витков юлташ, ун çине савăнăçлăн пăхса:

— Мĕншĕн канма каймастăн, ĕнер 19 сехет ĕçлерĕн, паян та 20 сехет ытла ĕçлетĕн, — тенĕ.

— Халĕ вилĕмпе пурнăç кĕрешнĕ самантра канма юрать-и, вара, тăшмана çĕнтернĕ хыççăн канăпăрха,—тенĕ ăна хирĕç Зоя.

Чăнласах та Зоя мĕнле канăва та пĕлмен. Яланах ĕç çинчен шутланă. Квалификациллĕ слесарь пулас ĕмĕт унăн пуçĕнчен тухма пĕлмен.

1942 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ уншăн нихăçан манми кун пулса тăнă. Çак кун ăна комсомол ретне илнĕ. Комсомол билетне алла илсе, вăл çапла каланă:

— Эпĕ Ленинла-Сталинла комсомол ятне ямăп, хамăн мĕнпур пек вăя фронтпа çĕршыва кирлĕ заказсем тунă çĕре парăп,—тенĕ.

Çав кунран пуçласа вăл ĕç нормине тăтăшах 500—600 процента çити тултарса пынă.

1942 çулта Зоя Михайловна Данилова заводра лайăх ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине илнĕ. Çак наградăна илнине Зоя татах та тухăçларах ĕçленипе ответленĕ.

Вăл заводра ĕçлеме пуçлани икĕ çул иртрĕ ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче Зоя, цехри пур ĕçсене те вĕренсе çитсе, хăйĕн ĕçри опытне ытти çынсене те пама пултарчĕ.

— Маттур та пултаруллă хĕрача вăл, пур ĕçе те тĕплĕн те хăвăрт тăвать,—тет ун çинчен цех начальникĕ Кинзбургский юлташ.

Ахальтен мар ĕнтĕ ăна кăçалхи февраль уйăхĕнче правительство «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль парса наградăларĕ. Çак пысăк наградăна илнĕ ятпа вăл, пĕтĕм завод коллективĕ умĕнче тупа туса, çапла каларĕ:

— Спасибо Сталин юлташа тата правительствăна мана çакăн пек пысăк чыс тунăшăн. Эпĕ çак наградăна ĕçпе ответлĕп. Малашне тата лайăхрах, тата вăйлăрах ĕçлеме пулатăп,—терĕ.

— Халĕ Зоя Данилова ВКП(б) членĕн кандидачĕ, агитатор. Чăваш хĕрĕсем хушшинче агитациллĕ-ăнлантаруллă ĕçе туса пырать. Унăн примĕрĕпе ытти ĕçлекенсем те ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ.

Зоя Михайловна Данилова Васле-касси ялĕнче (Ишлей районĕ) 1924 çулта çуралнă. Ашшĕнчен 11 çулта юлнă.

Совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕ хĕрача мухтава тивĕçлĕ çын пулса тăчĕ.

Пирĕн çĕршывра Данилова пек патриоткăсем çĕршер пинĕн шутланаççĕ: Совет хĕрарăмĕсем Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче хăйсен пултарулăхне, пĕлÿлĕхĕпе хастарлăхне тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хÿтĕленĕ çĕре параççĕ.

Мухтав та чыс совет хĕрарăмне!

Ф. МАЛЫШКИН

Харсăр ăмăрткайăк

Сăмахĕсем П. ХУЗАНГАЙĂН. Музыки Г. ХИРПŸН

Чăваш халăх паттăрне—Совет Союзĕн Геройне Ф. Н. Орлов капитана.



1. Ял-ял урлă, хула урлă,
Ту, вăрман, уй урлă
Вĕçет пирĕн ăмăрткайăк
Ывăнми, хăюллăн. 2 хут.

2. Ун çинчен юрлаççĕ юрă,
Халапласçĕ шухă.
Ăна сăнă тивмест теççĕ,
Тивмест, теççĕ ухă. 2 хут.

3. Аçа çиçĕм пек кумать вăл
Тăшман пуçĕ çийĕн.
Аçа чуль пек анать çăмăл
Хар-хаяррăн, çиллĕн. 2 хут.

4. Йывăрри те уншăн çăмăл,
Аякри те çывăх.
Тавтăвать ăна çĕршывăм,
Сунать ырлăх-сывлăх. 2 хут.

5. Тавтăвать ăна пур халăх:
Тайма, пуçăм, тайăн!
Сывă пултăр, ывă пултăр —
Харсăр ăмăрткайăк. 2 хут.

Колхозсен вăрлăх фондне

Колхозсен вăрлăх фондне çак çулăмлă патриочĕсем хăйсен колхозниксем—тăван çĕршыван запасĕнчен хывнă:

Е. Я. ВАХИТОВА—Комсомольски районри «Янга Турмыш» колхозри колхозница 21 пăт тĕштырă.

И. А. МЕДВЕДЕВ — çав районри «Красный Октябрь» колхозăн кладовщикĕ — 18 пăт çĕрулми.

Д. А. АКЧУРИН — «Красный Октябрь» колхоз председателĕ — 19 пăт çĕрулми.

А. ГРИГОРЬЕВ — çав колхозри бригадир — 9 пăт çĕрулми.

И. ДЕНИСОВ — çав колхозри тимĕрçĕ — 5 пăт çĕрулми.

А. ГУРЬЕВА — «Новая жизнь II-ая» колхоз членĕ — 6 пăт çĕрулми.

Т. НИКОЛАЕВА — çав колхозри колхозница — 6 пăт çĕрулми.

А. Г. УТКИН — «Красный борец» колхоз членĕ, туллимар вăтам шкулта ĕçлекен военрук — 63 пăт çĕрулми.

А. ПОРТНОВ — çав колхозри колхозница — 15 пăт çĕрулми.

Н. ЛЮЛИН — Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз бригадирĕ—15 пăт тĕштырă.

В. В. Зайцев — çав районри Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ—9 пăт тырă.

И. ГОЛОВИН — Елчĕк районĕнчи «Комбайн» колхоз председателĕ 15 пăт тырă.

Ф. ШИЛОВА — çав колхозри счетовод—20 пăт тырă.

Çĕнĕ çĕкленÿпе

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Шăхачри «Коммунар» промысла артель коллективĕ Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă ятпа панă приказĕ çине ĕç тухăçлăхне ÿстернипе ответлет. Артель февраль уйăхĕнчи задание срокчен пурнăçларĕ. Стахановецсем П. Узюкин, В. Узюкин, П. Убаськина, Л. Ильина юлташсем ĕç нормине кашни кунах 125—130 процент тултараççĕ.

Артель коллективĕ кăçал хăйен подсобнăй хуçалăхĕнче пуян пахча-çимĕçпе тырпул туса илессишĕн тăрăшать. Подсобнăй хуçалăх çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Акмалли вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ. Уя 800 лав тислĕк кăларнă. Минераллă удобренисем пухас ĕçе те тытăннă.

Сестра Мария

Икĕ талăк ыйăха пĕлмесĕр ĕçленĕ Мария. Куç хупма мар, пĕр самантлăх канма та вăхăт пулман унăн. Виççĕмĕш талăкĕ татах та хĕрÿллĕрех пулнă. Мĕн иртенпех полевой госпитале илсе пынă боецсене пĕрерĕн йышăннă вăл, кашнин суранĕсене çуса тасатса, тирпейлĕн пуçтарса çыхнă, унтан вара боеца хăрушă мар çĕре, хÿтлĕхе вырнаçтарса выртарнă, ăна апатлантарнă, ĕçтернĕ, ачашшăн пăхнă.

Питех те хĕн килнĕ çав кун боецсене. Шурăмпуçĕпе пуçласа кас пуличчен ансăр участокри пирĕн оборона позицийĕсем çине снарядсемпе минăсем вĕçĕ-хĕррисĕр тăкăна-тăкăна çурăлнă, танксем таттисыпписĕр тапăнса пынă, самолетсем боецсем çине тÿперен пулеметсенчен тĕллесе пенĕ, бомбăсем пăрахнă. Çапăçу уй-хирĕ çине пăхма та хăрушă пулнă.

Тем пек асаплă та йывăр пулсан та, боецсем чăтнă, вĕсем каялла чакман. Юнпа, юлташĕсен пурнăçĕпе çĕнсе илнĕ тăван çĕре тăшмана каялла паман. Боецсем тарпа юн юхтарса тăван çĕре хÿтĕленине Мария курнă, вăл çапăçу уйĕпе госпиталь хушшинче ывăнма пĕлмесĕр, хыпаланса чупса çÿренĕ, окопсемпе траншейăсенчен йывăр аманнă воинсене кĕтсе илнĕ е сĕклесе тухма пулăшнă.

Пур çере те çитме ĕлкĕрнĕ вăл, пур ĕçе те хăй аллипе çыпçуллăн тăвасшăн çуннă унăн чĕри.

— Мария, выртса кансам, эпир сансăрах ĕлкĕрĕпĕр, — тенĕ ăна ытти сестрасем.

— Халь канма вăхăт-и вара? — ответленĕ вăл тантăшĕсене.

Кăнтăрла çитнĕ тĕле госпитальре йывăр аманнисем чылай пуçтарăннă. Вĕсене кунти госпитальре тытса усрама юраман, васкаса тыла ăсатмалла пулнă. Тăшман авиацийĕ тата артиллерийĕ канăç паман. Умсăр пуçне пирĕн позицисем умĕнче çа-

пăçу хĕрнĕçемĕн хĕрсех пынă. Нимĕçсем, хăйсем çав тери пысăк çухатусем тÿснине пăхмасăр, хула патнелле, мăн çул патнелле тапаçланнă.

Сывмаррисене тыла леçме приказ илсен, Мария хăрушă çула кайма хатĕрленнĕ. Аманнă боецсене машинăсем çинче выртса е ларса пыма çăмăл пултăр тесе, кузовсем çине утă-улăм сарнă вăл, кашнине хăй тирпейлĕн вырнаçтарса лартнă е выртарнă, госпитальри пур фляга-семпе кĕленчесене пухса, çул çинче сывмаррисене ĕçтерме вĕретнĕ шыв тултарнă. Машинăсем паллă ан пулччăр тесе, шоферсемпе пĕрле симĕс сулçăллă йывăç турачĕсем касса, вĕсене кузовсем тавра çирĕплетсе, çыхнă е пăтапа çапса çирĕплетнĕ.

Йывăр аманнă боецсене ултă машина çине тиесе, Мария çула тухнă. Мăн çул тăрăх унталла та, кунталла та танксем, машинăсем иртсе çÿренĕ, тупăсем турттаракан тракторсемпе тягчасем, лавсем ирте-ирте кайнă. Çул çинче иртсе çÿреме тăвăр пулнă. Хĕвел хĕртсе пăхнă. Тÿпене çăра, сарă-хăмăр тусан пĕлĕчĕ çĕкленнĕ. Тусанлă вĕри сывлăш сăмса-çăвара кĕрсе кăтăкланă, пĕçертнĕ, ÿсĕрттернĕ, сывлама кансĕрленĕ, куçа çинĕ.

Машинăсем малалла чупнă. Çул тÿп-тÿрĕ те тап-такăр, анчах малалла хăвăрт кайма май пулман, умма тусан пĕлĕчĕ карса илнĕ те умра мĕн пуррипе çукки те курăнман.

Чип-чипер пынă çĕртех, сасартăк сывлăш тискеррĕн шăхăрса улани пĕтĕм ÿт-пĕве çÿçентерсе янă, унтан çĕр чĕтренсе кайнă, вара çав самантрах умра тăпрапа хуп-хура тĕтĕм юпи çĕкленнĕ. Мария шофер кабинин алăкне уçса тÿпенелле пăхнă. Унта, шăп та шай вĕсен пуçĕсем тăррипче, самолетсем ярăмăн-ярăмăн вĕçсе пынă.

— Чарăр машинăсене, — хушнă вăл шоферсене. Унтан кабинăран тухсан, ура ярса пуснă-пусманах, ăна сывлăш хумĕ çĕклесе ывăтнă, тепĕр бомба çĕре ÿксе çурăлсан, Мария тăпра айне пулнă.

Мĕн чухлĕ выртнă вăл тăпра айĕнче, кам ăна унтан чавса кăларнă, Мария ăна-кăна пĕлмен, анчах каярахпа тăна кĕрсен, вăл курнă: кузовсенчи боецсенчен чылайĕшĕ вырăнта пулман, хăй ларса пынă машинăн моторне вут хыпса илнĕ, ăна сÿнтерес тесе, мотор умĕнче шофер чупса çÿренĕ, шоферăн пичĕ тăрăх юн юхнă.

Пуç саврăннă, шăм-шак ыратнă, Урасем вырăнтан тапранман. Хăлхасенче темскер кĕрлесе тăнă. Куçсенчен вĕтĕ-вĕтĕ вут-вучах хĕмĕсем сирпĕннĕ. Мария такама чĕнсе çăварне уснă, анчах сас тухман, чĕлхе пуплемен. Юн юхнă, анчах унăн ăшшине ÿчĕ туйман. Мĕн ку? Мĕн пулнă? Мария ерипен тăна кĕнĕ, мĕн пулса иртнине тавçăрма пуçланă.

Хăйне-хăй ирĕксĕрлесе, шăм-шакĕ ыратнине чăтса, Мария куçĕпе хăйĕн сывмар боецĕсене шыранă, вĕсене алла хăй патне чĕннĕ. Нимĕç самолечĕсем тапăннă вăхăтра, камăн вăйпа чăтăмлăх çитнĕ, вĕсем машинăсем çинчен хăйсем тĕллĕнех сикесике аннă, е йăвана-йăвана ÿкнĕ, упаленсе хырăм çинче шуса канавсемпе лапамсене е ытти хÿтĕлĕхсем патне пыра-пыра выртнă. Халĕ вĕсене Мария пĕр çĕре пуçтарнă. Çулпа иртсе пыракансем — çуран-и вĕсем, лавпа-и, е машина çинче-и,— вĕсем пурте Марийăна курсанах, мĕн пулса иртнине ăнланса илнĕ, вĕсем пурте ăна пулăшма васканă.

Мария хăйĕн колоннине пуçтарса малалла çул тытнă.

Хăлхасăр, чĕлхесĕр Мария, шăмшакĕ çав тери ыратнине пăхмасăр, вĕтĕ пĕрчĕн юхакан юнне тутăрпа шăла-шăла типĕтсе, машинăсене тата хăйне шанса панă çынсене малалла илсе кайнă.

Вырăна çитсен, Марийăна шоферпа юнашар ларнă çĕртенех госпитале çĕклесе кĕнĕ, ăна унта сывалма выртарнă.

Унтанпа ĕнтĕ чылай вăхăт иртнĕ. Мария сывалнă. Госпитальрен тухнă кун, ăна киле кайма, килте пурăнса сывлăхне çирĕплетме сĕннĕ. Никам сăмахне те итлемен вăл. Çамрăк патриоткăн вĕри чĕрийĕ каллех фронталла туртăннă. Вăл çак йывăр вăхăтра фронт тулашĕнче пурăнма пултарайман. Фронтра, урăх ниçта та мар! Манăн кунçул унта! — çапла шутланă вăл.

Эпĕ Марийăна иртнĕ çулхи хĕлле тĕл пулнăччĕ. Ун чухне мана вăл ĕçлекен госпитальре сывалма тĕл килнĕччĕ.

Эпир, унăн палаткинче выртакансем, Марийăн пархатарлă ĕçне курса, пĕтĕм чĕререн савăнаттăмăр. Вăл палаткăра чух, эпир пурсăмăр та унăн çав тери ырă кăмăлне туяттăмăр. Сывмаррисене ачашшăн, тимлĕн пăхатчĕ. Вăл палаткăра çук чухне пурне те кичем пек туйăнатчĕ.

Юлашки кунсенче мана каллех çав госпитальре виççĕ эрне ытла сывалма тĕл килчĕ. Марийăна, хамăрăн землячкăна, каллех тĕл пулăм. Вăл çав-çавах ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Фронта Мария вăрçă пуçлансан тепĕр кунне тухса килнĕ. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ вăл фронтра. Мĕн тери ÿснĕ вăл çак çулсенче. Халĕ Мария коммунистка, агитатор. Хăйĕн çулăмлă сăмахĕсемпе госпитальре сывалакан воинсене хавхалантарать вăл. Фронта тухса килнĕ чухне, Мария вырăс тата чăваш чĕлхисемпе ирĕккĕн калаçнă. Фронтра вăл тутар, казах тата узбек халăхĕсен чĕлхисене вĕреннĕ. Çавăнпа та командовани ăна тутарсемпе казахсем тата узбексем хушшинче агитатор пулса ĕçлеме уйăрнă. Хăйне шанса панă ĕçе Мария чĕререн юратса тăвать. Халĕ вăл Украина чĕлхине вĕренет.

Мария ĕçне пирĕн партипе правительство питĕ пысăккăн хаклаРĕç. Вăл правительство наградине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Чăваш хĕрачисем! Çапла ĕçлет сирĕн тусăр Вăрмар районĕн хĕрĕ— Мария Максимовна Леонтьева. Вăл халăхшăн, тăван çĕршывшăн, сирĕн пурнăçăрпа кунçулăрсем ÿлĕм çав тери илемлĕ, çав тери капăр та телейлĕ пулччăр тесе, кас çывăрмасть, кăнтăрла канмасть, ...ĕçре... ывăнма пĕлмест.

Тав та чыс ăна!

Михаил ЯКИМОВ.

ДНЕПР ЛЕШЬЕНЕ.

Ют çĕршывсенче

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăрхĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Адмиралтейство утравĕсем çинче (Бисмарк архипелагĕнче сурçĕртерехре) Япони çарĕсем, хăйсен позицийĕсене лайăхлатма хăтланса тата Момоте аэродромне каялла туртса илесшĕн пулса, темиçе хутчен те атакăланă. Союзниксен çарĕсем Япони çарĕсен пур атакисене те сирсе янă. Японецсенне 3.000 çын вĕлерсе пĕтернĕ е амантнă. Союзниксен çарĕнче 61 çын вилнĕ тата 244 çын аманнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: лару-тăру пур фронтсенче те лăпланчĕ. Анцио районĕнчи плацдарма тăшман темиçе атака пуçласа янă, союзниксен çарĕсем вĕсене пурне те сирсе янă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем сăртлă-туллă секторта тăшманăн пĕр пĕчĕк атакине сирсе янă. Американецсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче патрульсем кĕрешнĕ тата тăшмана хирĕç артиллери персе тăнă.

Мартăн 3-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ тăшман аэродромĕсем çине, артиллери позицийĕсем çине тата ытти объектсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех тата Югослави çыранĕсем патĕнче тăшман суднисене тапăннă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсри авиацийĕн самолечĕсем пĕр кун хушшинче 1.400 вĕçеве яхăн тунă. Çапăçусем пынă районра тăшман авиацийĕ кĕрешни пулман.

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: çанталăк начар тăнă пирки пур фронтсенче те операцисем сахал пулнă. Анцио районĕнчи кĕпер умĕнчи укрепленисем çинче тăшман пĕр вăйлă мар атака тунă. Союзниксен çарĕсем çав атакăна сирсе янă. Ытти операцисем çинчен калас пулсан, патрульсем кĕрешни çинчен асăнма пулать. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшман пĕр тĕлте пуçласа янă атакăна сирсе янă. Американецсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче патрульсем кĕрешнĕ.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка истребителĕсем мартăн 3-мĕшĕнче кăнтăрла Берлина тапăнса штурмланă.

Американецсен 8-мĕш авиаци корпусĕнче тăракан йывăр бомбардировщиксем, союзниксен истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе, Сурçĕр-Хĕвеланăç Германири тата Сурçĕр Францири объектсене тапăннă.

США АРГЕНТИНĂПА ÇЫХĂНМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, унта США-па Аргентина пĕр-пĕрипе çыхăнма пăрахни çинчен пĕлтернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99 промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00055 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.